**Чее кушак**

Эпӗ сире пӗр мыскараллӑ ӗҫ ҫинчен каласа парам. Пӗр мужикӗн икӗ ӗне пулнӑ. Пӗр ӗни унӑн тем пирки чирлесе ӳкнӗ. Мужик нумай шухӑшласа тӑмасӑрах ӗнине аш-какайпа сутӑ тӑвакан патне ҫавӑтса кайнӑ. Чирлӗ ӗнене вунӑ тенкӗ сутнӑ та килне тавранса хут укҫана ҫӳлӗк ҫинче ларакан тӑм чӳлмеке хунӑ. Ирхине арӑмӗ, укҫине упӑшки йӑта хунине пӗлменскер, ӗне суса кӗнӗ те сӗтне хайхи чӳлмеке шарлаттарнӑ.

– Пӗтертӗн укҫана,– тенӗ упӑшки.

Вара вӗсем васкаса сӗтне урӑх ҫӗре пушатнӑ та йӗпеннӗ укҫине хӑйӑ ҫине типме ҫакнӑ.

Ҫаксене паҫӑртанпах сӑнаса ларакан кушак сӗтлӗ укҫана кап хыпса илнӗ те картишнелле тухса вирхӗннӗ. Хуҫисем – ун хыҫҫӑн. Анчах чӑрсӑр кушак аҫи вӗсем хӑваласа ҫитсе туртса иличчен укҫана чӑмласа яма та ӗлкӗрнӗ. Тӗрӗс те тунӑ: ҫапа пӗлмен пушӑ хуҫине хӑйне пырса тивнӗ. Чирлӗ ӗнене сутса мужик ҫынсене улталасшӑн пулнӑ та – хӑй улталаннӑ.

1858

*Михайлов-Янтуш, С. Чее кушак / С. Михайлов-Янтуш // Чӑваш сӑмахлӑхӗ : 10-мӗш класӑн вӗренӳпе вулав кӗнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин пухса хатӗрленӗ. – Шупашкар, 1993. – I пай. – С. 271-272.*